26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 АВГУСТ 1 ВЫРСАРНИКУН 154(6391) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Хуласемпе предприятисене хĕле тĕплĕн хатĕрлер

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче виççĕмĕш хĕл çывхарса килет. Промышленность предприятийĕсемшĕн, хуçалăх организацийĕсемшĕн вăл уйрăмах ответлă тапхăр пулса тăрать. Мĕншĕн тесен кĕркуннене хĕллехи вăхăтра, çанталăк условийĕсене пула, вĕсен ĕçĕнче йывăрлăхсем пулма пултараççĕ. Вăл йывăрлăхсене çĕнтерме хĕллене халех тĕплĕн хатĕрленсе çитмелле.

Республикăри хуласемпе предприятисенче хĕллене хатĕрленес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунă. Шупашкарти «Кожупряжь» артель, леспромартель тата ыттисем те кăçалхи хĕле çителĕклĕ таран вутă хатĕрленĕ, пурăнмалли çуртсене юсанă. Канашри «Авангард», «Красный воин», Сталин ячĕпе тăракан артельсем те хĕле хатĕрленес енĕпе сахал мар ĕçсем тунă.

Анчах республикăра хĕле хатĕрленес ĕç çителĕклĕ пулса пырать теме çук-ха. Нумай предприятисенче хĕллене хатĕрленесси сўрĕк пырать. Шупашкар хулинче кăçалхи хĕл валли 25 пурăнмалли çурта юсамалла. Паянхи куна 6 çуртне çеç юсанă. План тăрăх ку ĕçре 49 çын ĕçлемелле пулсан, халĕ 20 çын çеç ĕçлет. Горкоммунхоз ĕç вăйĕ пухас енĕпе сахал интересленнĕ. Смета тăрăх çуртйĕрсене юсама 182 пин тенкĕ укçа уйăрнă, вăл хисепрен 60 пин тенкине расходланă. Çавăн пекех хула валли вутă хатĕрлес ĕç те начар пырать.

Канашри вагонсем юсакан заводра иртнĕ çулта хĕллене тĕплĕн хатĕрленмен пирки, сахал мар çитменлĕхсем пулнă. Завод руководителĕсем, партипе совет организацисем вăл урокпене манса кайнă пулас, хĕллене хатĕрленесси кăçал та вăраххăн пырать. Заводра хĕллене хатĕрленме май уйăхĕнчех тытăннă. Апла пулин те производство çурчĕсене, оборудованисене, чугунçул юппине, пурăнмалли çуртсене юсаса пĕтермен.

Хĕле хатĕрленес ĕç республикăри ытти хуласемпе предприятисенче те çителĕксĕр пырать-ха. Паянхи ответлă ĕç—хĕле тимлĕн хатĕрленесси. Хуçалăх ĕçĕнчи çитменлĕхсене халех пĕтермесен, вăл çитменлĕхсем хĕл вăхăтĕнче темиçе хут ытларахăн палăрĕç.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар историре пулман паттăрлăхпа хастарлăх кăтартса çапăçать. Социализмлă промышленность фронта çĕрнывра ытларах та ытларах продукци пама тивĕç. Çак тивĕçе ăнăçлăн пурнăçлама пирĕн заводсемпе фабрикăсен, предприятисен пысăк тухăçлăхпа ĕçлесе пымалла. Çавăнпа та хăлĕ хĕл валли топливо тата чĕрлавар сем кирлĕ чухлĕ хатĕрлесе хурасси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Рабочисем валли пухăçлăн ĕçлеме условисем туса парасси çине, вĕсен сывлăхне сыхласси çине уйрăмах тĕплĕн çавăрăнса пăхмалла. Производство тата пурăнмалли çуртсен çийĕсем, чÿречисем, алăкĕсем лайăх пулмачăр, вентиляцисем ĕçлетчĕр. Хĕлле кирлĕ пур япаласене те шута илмелле. Кашни предприятин хăйĕн уйрăмлăхĕсем пур. Вĕсене пурне те шута илсе, мĕн кирлисене пĕтĕмпех хатĕрлемелле.

Вырăнти предприятисемпе учрежденисем валли вутă хатĕрлес ĕçĕн çуллахи графикне Комсомольски, Первомайски, Шупашкар, Вăрнар тата Калинино районĕсем пурнăçларĕç. Анчах та Шăмăршă, Куславкка, Пăрачкав, Шăхасан, Канаш районĕсем вутă хатĕрлес плана 30 процента яхăн çеç пурнăçланă.

Паллах, хĕле хатĕрленес ĕçсем çакăн пек пулса пынине малашне тÿссе тăма çук. Партипе совет организацисен руководителĕсен ку тĕлĕшпе халех тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. «Ĕлкĕрĕпĕр-ха» тесе ларни пачах пулмалла мар. Вутă хатĕрлес, çуртйĕрсене юсас ĕçсенче тапăклă улшăну туни кирлĕ.

Хĕле хатĕрленес ĕçре хозяйственниксене профсоюз организацисен пысăк пулăшу парас пулать. Завкомсен, месткомсен хăйсен яланлăх комиссийĕсене хĕле хатĕрленесси мĕнле пынине тĕрĕслесе тăрас ĕçе явăстармалла.

Хуласене хĕле хатĕрлес тĕлĕшре суту-илÿ тата хатĕрлев организацийĕсем те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар валли кирлĕ продукци туса кăларакан рабочисемпе служащисен хĕл вăхăтĕнче апат-çимĕç çителĕклĕ пулмалла, ăна суту-илÿ организацийĕсемпе заготовительсен хĕле кĕричченех хатĕрлесе хумалла. Иртнĕ хĕлте Канашра тата ытти хуласенче пахча-çимĕçсем енĕпе хăшпĕр çитменлĕхсем пулчĕç. Суту-илÿ организацийĕсем, май пур çĕртенех, çĕрулмипе ытти пахча-çимĕçсене вăхăтра туртарса çитереймен. Вăл йăнăшсем кăçалхи çул пулмалла мар. Кĕркуннене çитиччен пахча-çимĕçсене усрамалли складсене, катка-пичкесене хатĕрлесе çитермелле.

Кашни предприятин, кашни учрежденин, пурăнмалли кашни çуртăн хĕл вăхăтĕнче хутма кирлĕ чухлĕ вутă пултăр, кашни çурт юсавлă пултăр, сивве пула пирĕн заводсемпе фабрикăсен ĕçĕнче чăрмавсем ан пулччăр,—çакăншăн тăрăшас пулать паянхи кун партипе совет тата хуçалăх организацисен.

Паян чугунçул работникĕсен Пĕтĕм Союзри кунĕ

Чугунçул работникĕсем кĕрешÿре

1935 çулта июлĕн 30-мĕшĕнче Кремльре Сталин юлташ тата Партипе Правительствăн ытти руководителĕсем чугунçул çинче ĕçлекенсемпе тĕл пулса калаçнă. [illegible]

[illegible] Шупашкар станцинче ĕçлекен железнодорожниксем [illegible] 1943 çулăн [illegible] 341 процент пурнăçларĕç. [illegible] А. Александрова [illegible] 200 процент [illegible] М. Брикман, Б. Белов [illegible] 110—120 процент пурнăçлаççĕ. [illegible]

[illegible] Стахановецсем Л. Егорова, Е. Антосина, В. Сергеев юлташсем те кĕтартуллăн ĕçлеççĕ. Егорова юлташ Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Станци хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе те чылай ĕçсем турĕ. [illegible]

Чугунçул çинче Хĕрлĕ Çарти пек [illegible]

Пĕтĕр чугунçул транспорчĕн [illegible]

Паян, [illegible] воскресник [illegible]

Чугунçул çинчи воскресник [illegible]

Транспорта çирĕплетесси, фронта мĕн кирлине вăхăтра парса тăрасси [illegible]

Ф. ПОДГОРНЫЙ,
Шупашкар станци начальникĕ.

ФЗО тата чугунçул училищисен спартакиади

Çак кунсенче Шупашкарта çăмăл атлетика спартакиади пулса иртрĕ. Унта ФЗО тата чугунçул училищисен вĕренекенĕсем 70 çын хутшăнчĕ. Командăсенчен 1-мĕш вырăна Сĕкĕрлери ФЗО шкулĕ, 2-мĕш вырăна Кустамкаси ФЗО шкулĕ, 3-мĕш вырăна Улатăрти чугунçул училищи йышăнчĕ.

А. ВАСИЛЬЕВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 30-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 30-мĕшĕнче ОРЕЛ енче пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пынă. Уйрăм участоксенче 4 километртан пуçласа 8 километра çити малалла куçса, халăх пурăнакан 20 пункта ытла йышăнса илнĕ.

БЕЛГОРОД енче разведчиксем вăйлăн çапăçнă.

Донбасра ВОРОШИЛОВГРАДРАН КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНАÇНЕРЕХРИ районра пирĕн войскăсем тăшман пехотин пысăк вăйĕсемпе танкĕсен атакисене сире-сире янă.

ЛЕНИНГРАД фронтĕнче разведчиксем вăйлăн çапăçнă тата уйрăм участоксенче вырăнти çапăçусем пулса пынă.

Июлĕн 29-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче пирĕн войскăсем нимĕçсен 21 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе тăшманăн 37 самолетне ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Орел енче пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пынă.

Орелран çурçĕртерехре совет чăçĕсем нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтерсе малалла куçнă. Ирхине тăшман пехотин пĕр полкĕ, танксен пысăк ушкăнĕ тата темиçе вунă самолет пулăшнипе, пирĕн пĕр гвардейски чăçăн подразделенине атакăланă. Пирĕн боецсем оборонăра çирĕп тăрса нимĕçсене хавшатса çитернĕ, вара хăйсем атака туса тăшмана ывăтса янă та вăйлăн çирĕплетнĕ пункта йышăнса илнĕ. Çав çапăçусенче тăшманăн 800 салтакне çити вĕлернĕ. Нимĕçсен 9 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Гвардин пĕр кавалери чăçĕн подразделенийĕсем, наступление малалла вăйлатса пырса, нимĕçсене халăх пурăнакан темиçе пунктран хĕссе кăларнă.

Орелран хĕвелтухăçнерехре пĕр чăçри боецсем тăшман атакисене сирсе янă. Тыткăна лекнĕ нимĕçсем пĕлтернĕ тăрăх, вĕсене ĕнер кăна самолетсем çине лартса Штеттин хулинчен илсе килнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чăçсем пĕр кун хушшинчи çапăçура нимĕçсен 1000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Ведунин лейтенант командир пулса ертсе пыракан боецсен ушкăнĕ тăшманăн тылне тухнă та нимĕçсем йышăнса тăнă яла сасартăк кĕрсе кайнă. Штык вĕççĕн çапăçса, пирĕн боецсем 60 гитлеровеца вĕлернĕ, халăх пурăнакан çав пункта хăйсен чăçĕ пыричченех тытса тăнă.

Орелран кăнтăртарахра тăшман темиçе хутчен те контратакăсем тунă, анчах та пирĕн чăçсем пыра-пыра çапнипе пĕр позици хыççăн тепĕр позици çухатса каялла чакнă. Гитлеровецсем сыпăсем енĕпе тата техника тĕлĕшпе йывăр çухатусем тÿсеççĕ. Пĕр соединени кун каçиччен тăшманăн 2.000 салтакĕпе офицерне вĕлерсе тăкнă. Нимĕçсен 15 танкне, хăй тĕллĕн çÿрекен 2 орудине персе çĕмĕрнĕ, 15 орудипе тата миномётсен 5 батарейине пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем 6 танк, 12 орудипе тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Белгород енче разведчиксем çапăçнă. Пĕр участокра тăшман, усăллă позицие тытса илме хăтланса, пехотăпа танксен вăйĕпе атака пуçласа янă. Гварди лейтенанчĕ Остраев командир пулса ертсе пыракан çăмăл танксен роти тăшманпа çапăçма кĕрсе кайнă. Тăшманăн 3 танкне пĕтерсе тăкнă хыççăн пирĕн танкистсем нимĕçсен наступлени тăвакан пехотине саппаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 8 истребитель старши лейтенант Голячков командир пулса ертсе пынипе нимĕçсен пирĕн тип çĕр çинчи войскăсене тапăнма пыракан 23 самолетне пÿлсе илнĕ. Пирĕн летчиксем тăшмана бомбăсене пирĕн войскăсем çине пăрахма памасăр, каялла хăваласа янă. Сывлăшри хаяр çапăçура Голячков «Юнкерс—87» йышши пĕр самолета тата «Мессершмитт-109» йышши тепĕр самолета персе ÿкернĕ. Будашвилипе Герасименко летчиксем иккĕшĕ пĕрле кĕрешсе нимĕçсен 3 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн самолетсем пурте хăйсен аэродромĕсене таврăннă.

* * *

Донбасра, Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн войскăсем тăшман пехотин пысăк вăйĕсемпе танкĕсен атакисене сире-сире янă. Нимĕçсем совет войскисем юлашки çапăçусенче тытса илнĕ позицисене атакăлаççĕ. Пирĕн чăçсем гитлеровецсен атакисене сире-сире ярса тăшмана йывăр çухатусем кÿреççĕ. Нимĕçсене совет артиллерийĕ уйрăмах пысăк çухатусем кÿрет.

Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем, туллимар данвăйсем тăрăх, нимĕçсен 14 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн артиллеристсемпе минометчиксем нимĕçсен 52 дзочĕпе блиндажне ишсе антарнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă тата гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн летчиксем тăшманăн чугунçулпа пыракан 3 составне сирпĕнтерсе янă тата нимĕçсен 4 самолетне персе ÿкернĕ. Пĕр участокра Юрин лейтенант тата Яндаев кĕçĕн лейтенант командир пулса ертсе пыракан разведчиксен ушкăнĕ нимĕçсен траншейисене кĕрсе кайнă та унти гитлеровецсем çине гранатăсем вăркăнтарнă. Гитлеровецсен пысăк ушкăнне пĕтерсе тăкса хăшне-пĕрне тыткăна илнĕ хыççăн, пирĕн разведчиксем хăйсен малтанхи позицине таврăннă.

* * *

Калинин фронтĕнче пĕр чăçри разведка тăвакан ушкăн, тăшмана сасартăк пырса çапса, халăх пурăнакан пунктран хĕссе кăларнă, вара хăйсем çав пунктра çирĕпленсе ларнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 80 вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра пирĕн разведчиксем засадăра ларакан нимĕçсене тапăнса, 20 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Финн заливĕнче пирĕн авиаци тăшманăн пĕр транспортне путарнă, тепĕр транспортне пысăк сиен кÿнĕ.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем тăшманăн хуралта çÿрекен икĕ карапне путарнă.

* * *

Орел облаçĕн районĕсенчен пĕринче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем партизансен пĕр отрядне тапăннă. Совет патриочĕсем гитлеровецсене хăйсем патне çывхарса çитме панă та пур йышши хĕçпăшалпа та пеме пуçланă. Тăшман атаки пăчланса ларнă. Гитлеровецсене 100 çынна çити вĕлернĕ тата амантнă. Нимĕçсен каялла чакма лекнĕ. Орел облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен фронталла пыракан колоннине атакăланă. 34 гитлеровеца вĕлернĕ. 58 нимĕçе амантнă.

ТАСС опроверженийĕ

Нимĕçсем радио тăрăх: Орел районĕнче совет войскисем Германи тумтирне тăхăнтартнă красноармеецсен чăçĕсене çапăçăва кĕртеççĕ, тесе пĕлтерÿ сараççĕ.

ТАСС çапла калама полномочи илнĕ: çак пĕлтерÿ чăнлăхпа нимĕн чухлĕ те çыхăнман суя пĕлтерÿ пулса тăрать. Çавăн пек майсемпе совет войскисем нихăçан та усă курман тата усă курмаççĕ те, çав вăхăтрах вĕсем ун пек майпа усă курма пултарĕç пулĕччĕç, мĕншĕн тесен нимĕç войскисем хăйсен чăçĕсене пĕр мутчен кăна мар красноармеецсен тумтирĕсене тăхăнтартса çапăçтарнă, ун çинчен совет пичетĕнче темиçе хут та пĕлтернĕ ĕнтĕ.

Гитлеровецсен Лабинская станицăнчи тискер ĕçĕсем

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧĔ. Красноармеец Леонид Гузман хăйĕн Краснодар крайĕнче пурăнакан йăмăкĕнчен çыру илнĕ. Вăл çырура гитлерла вăрă-хурахсем Лабинская текен пысăк станицăра тунă тискер ĕçсем çинчен каланă.

«Нимĕçсем пирĕн Лабинская станицине илсен,—тесе çырать Глузман йăмăкĕ,—малтанхи кунсенех пĕтĕм еврейсене уя хуса кăларчĕç те—çитĕннĕ çынсене персе вĕлерчĕç, ачасене тутисенчен вĕлермелли эмел сĕрсе ячĕç. Ачасем асапланса вилчĕç. Каярахпа нимĕçсем урăх йышши япалапа усă курма пуçларĕç. Хăйсен аллине лекнĕ çынсем çине темĕскле порошок сапаççĕ те вĕсен çийĕнчи тумтире вут тивертсе яраççĕ. Çынсем вара çурта пек çунса каяççĕ. Унтан нимĕçсем чăсах çынсене «паспартласси» çинчен пĕлтерчĕç. Çакăн хыççăн вара станицăри нумай çынсем куçран çухалчĕç. Станицăна нимĕçсенчен хăтарнă хыççăн тин, полици пурăннă çуртăн килкартинче, вырăс çыннисен виллисемпе тултарнă 6 пысăк лакам тупрĕç. Пĕр лакăмĕнче 50 çын вилли пулнă. Лейтенант арăмĕнне, Вальăнне, кăкăрĕсене касса илнĕ, сăмсисене, хăлхисене касна, аллисене çунтарса янă.

Кунтан чакса тухнă чух нимĕçсем, пĕр çурта нумай çынна хупса вĕсене çурчĕ-мĕнĕпех çунтарса яма хăтланчĕç. Анчах та вĕсене пире хăтаракан Хĕрлĕ Çар çитсе çăлчĕ. Тухса каяс умĕн нимĕçсем çу заводне, армана сирпĕнтерсе ячĕç, станцие вут тивертсе ячĕç, çын пурăнакан нумай çуртсене çунтарчĕç. Мĕскер илсе кайма май пур, çавсене пурне те хăйсен ылханлă Германине ăсатрĕç. Юратнă пиччем, тăшмана тавăрăр!

Полина Глузман, Краснодар крайĕ, Мостовая станици, Киров урамĕ—76».

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Г. Н. СОРОКИН юлташа Чăваш АССР Коммунальнăй хуçалăх Халăх комиссарĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Георгий Никитич **Сорокин** юлташа Чăваш АССР Коммунальнăй хуçалăх Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи июлĕн 30-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Канашри вагонсем юсакан заводăн уйрăмах палăрнă рабочийĕсене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Чугунçул çинче ĕçлекенсен Пĕтĕм Союзри кунне палăрă тунă май, производство заданийĕсене ăнăçлăн тултарнăшăн Канашри вагонсем юсакан заводăн уйрăмах палăрнă çак рабочийĕсене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Даниил Георгиевич **Боболева**—токарь-лекальщике.
2. Степан Яковлевич **Васильева** — ТЭЦ кочегарне.
3. Ефросиния Ивановна **Высоцкаяна**—пекаре.
4. Григорий Дмитриевич **Гришина** — ТЭЦ-ри дежурнăй инженера.
5. Николай Григорьевич **Григорьева**—ремонтно-механически цехри электросварщике.
6. Анна Васильевна **Годятскаяна** — отделочнăй цехри лакировщицăна.
7. Иван Данилович **Данилова** — ТЭЦ-ри турбина залĕн мастерне.
8. Михаил Афанасьевич **Дмитриева**—вагонсем тăвакан цех начальникне.
9. Антан Федотович **Демьянкова** — цех мастерне—смена начальникне.
10. Михаил Васильевич **Дьяченкона**—сварщик-наладчика.
11. Василий Ефимович **Ефимова** — вагонсем юсакан цехри слесарьсен бригадирне.
12. Иван Иванович **Захарова** — ремонтпа утилизаци цехĕн тимĕрçне.
13. Михаил Иванович **Забиякина** — цех начальникне-инженера.
14. Степан Ильич **Иванова** — технически директора.
15. Василий Иванович **Иванова** — снабжени отделĕн грузчик-возчикне.
16. Иван Зиновьевич **Котляра** — урапасем тăвакан цехăн токарьне.
17. Иван Семенович **Кривцова**—механически цехăн фрезеровщикне.
18. Николай Трифонович **Лещева** — подсобнăй хуçалăх директорне.
19. Василий Андреевич **Миронова** — тимĕрçсен цехĕн тимĕрçне.
20. Иван Николаевич **Николаева** — вагонсем тăвакан цехри слесарьсен бригадирне.
21. Александр Трофимович **Остапеца** —цех токарьне.
22. Иван Николаевич **Панкратова** — ТЭЦ-ри котельнăй цех мастерне.
23. Илья Павлович **Павлова** — механически цехри строгальщике.
24. Константин Павлович **Петруха** — транспорт отделĕнчи поезд машинистне.
25. Ефим Архипович **Плотникова** — администраципе хуçалăх отделĕн начальникне.
26. Михаил Алексеевич **Рязанцева** — вагонсем юсакан цехри комплекс начальникне.
27. Павел Алексеевич **Русина** — ВКП(б) Обкомĕн инструкторне.
28. Николай Михайлович **Свешникова** —ТЭЦ-ри пăс паракан цех начальникне.
29. Данил Сергеевич **Сергеева** — ТЭЦ-ри старши кочегара.
30. Иван Сергеевич **Смирнова** — инструментальнăй цехри термиста.
31. Онисим Демьянович **Собченкона**—литейнăй цехри формовщика.
32. Алексей Семенович **Третяка** — тимĕрçсен цехĕнчи прессовщика.
33. Мария Филипповна **Филипповăна**—йывăç каскалакан цехри станочницăна.
34. Никита Федорович **Федорова** — платниксен бригадирне.
35. Михаил Дмитриевич **Черноиога** — технически отдел начальникĕн заместительне.
36. Александр Андрианович **Щеголева** —вагонсем юсакан цех начальникĕн заместительне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи июлĕн 30-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хусан чугунçулĕн уйрăмах палăрнă работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Чугунçул çинче ĕçлекенсен Пĕтĕм Союзри кунне палăртнă май, производство заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн Хусан чугунçулĕн уйрăмах палăрнă çак работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Иван Александрович **Александрова** —ĕççыннн депутачĕсен Красноармейски райсовет исполкомĕн председательне.
2. Нина Анисимовна **Анисимовăна** — иккĕмĕш околотокри çулйĕр службин Шупашкар дистанцинчи старши рабочине.
3. Алексей Арсентьевич **Арсентьева** —çыхăну службин Канаш дистанцинчи монтера.
4. Дмитрий Петрович **Артюшева** — Улатăрти паровозсем юсакан заводри токаре.
5. Владимир Петрович **Бобровникова** — Улатăр станцинчи электроподстанцин начальникне.
6. Александр Григорьевич **Богатырева** — çулйĕр службин Шупашкар дистанцинчи пĕррремĕш околотокри çулйĕр обходчикне.
7. Василий Иванович **Вавилова** — движени службин Улатăр отделенин начальникне.
8. Владимир Петрович **Волгушева** — сигнализаципе çыхăну службин Улатăр дистанцинчи телеграфиста.
9. Вера Михайловна **Волковăна** — 265-мĕш километрти разъездри кĕçĕн стрелочницăна.
10. Василий Иванович **Воскобойника** — Канаш станцин деповĕнчи çуса тасатакан пайăн заведующине.
11. Иван Матвеевич **Галушина**—Канаш станцин начальникне.
12. Николай Федорович **Герасимова**— сигнализаципе çыхăну службин Канаш дистанцинчи электромеханика.
13. Николай Андреевич **Голованова** — Улатăр станцинчи депо машинистне.
14. Серафима Григорьевна **Григорьевăна** — çулйĕр службин Улатăр дистанцинчи 8-мĕш околотокри ремонтнăй рабочие.
15. Михаил Данилович **Данилова** — Канаш станцинче поездсене пухса йĕркелекене.
16. Иллиал Давидович **Даутова**—Канаш станцинчи топливо склачĕн рабочине.
17. Климентий Иванович **Демьяненкона** — Улатăрти паровозсем юсакан заводри урапасем тăвакан цех начальникне.
18. Дмитрий Федотович **Дубинина** — ВКП(б) Обкомĕн промышленноçпа транспорт отделĕн заведующине.
19. Александр Николаевич **Дубровские** —Улатăр станцин технически осмотр пунктĕнчи вагон мастерне.
20. Татьяна Федоровна **Дульцевăна** — паровоз хуçалăхĕн Улатăр отделенийĕнчи рабочисене ĕçе илекен отдел начальникне.
21. Константин Евсеевич **Евсеева** — Канаш станцинчи вагонсен сцепщикне.
22. Клавдия Ивановна **Едуновăна** — Улатăрти паровозсем юсакан заводри литейнăй цех формовщицине.
23. Николай Павлович **Елизарова** — Хусан чугунçулĕн Улатăрти йывăç каскалакан завочĕн столярно-механически цехри старши мастера.
24. Иван Степанович **Елисеева** — çулйĕр службин Улатăр дистанцинчи иккĕмĕш околотокри çулйĕр обходчикне.
25. Константин Петрович **Ерилина** — Улатăр станцинчи депори парти бюровĕн секретарьне.
26. Семен Иванович **Зотова** — Улатăр станцинчи топливо склачĕн рабочине.
27. Алексей Мартьянович **Иванова** — çулйĕр службин Улатăр дистанцинчи 8-мĕш околотокри çулйĕр мастерне.

(Малалли çитес номерте пулать)

Сталин юлташăн приказĕ республикăри ĕççыннисене çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарчĕ

Çĕнĕ обязательствăсем

ШУПАШКАР. Пир-авăр тĕртекен фабрикăри рабочисемпе работницăсем Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалĕн Сталин юлташăн пирĕн Орелпа Курск патĕнчи çапăçусенче палăрнă войскăсене саламлакан приказне тата Мускаври Киров ячĕпе тăракан «Динамо» завод коллективĕн чĕнĕвне сӳтсе-явса хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕç.

Çулпуçăн приказĕпе хавхаланса, фабрика коллективĕ 1943 çулта продукци туса кăлармалли плана декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне пурнăçа кĕртме, III-мĕш кварталта плана ытлашшипех пурнăçа кĕртме, ĕç тухăçлăхне 3 процент ӳстерме, чĕртавар, электроэнерги тата топливо перекетлеме, подсобнăй хуçалăхри тырпула пахча-çимĕçсене вăхăтра пухса кĕртме тата фабрика валли вутă хатĕрлемелли задание 120 процент пурнăçлама обязательство илчĕ.

Фабрика коллективĕ хăйĕн обязательствисене пурнăçлассишĕн мĕнтур вăйя хурса кĕрешет.

Я. РОХЛИН,
Фабрика директорĕ.

Колхозниксен отвечĕ

ЭЛЕК. (Хамăр корр.). Кĕçĕн Тукташри «Сунтал» колхозăн уйĕнче вăйлă тырпул кашласа ларать. Колхозниксем ир-ирех тырă вырма тухаççĕ. Вĕсен кашниĕнех пĕр шухăш—вăрçă вăхăтĕнчи ăнса пулнă тырпула пĕр тăккаламасăр, вăхăтра пухса кĕртесси.

Ĕç пĕр харăс пуçланать. Колхозниксем паян ĕнерхинчен лайăхрах ĕçлессишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртма тытăнаççĕ. Ăмăрту хĕрсе пырать.

Ку пĕчĕк колхоз. Пĕр бригада çеç кунта. Ăна 5 звенона уйăрнă. Уборка планĕ тăрăх, куллен 10 гектар пухса кĕртмелле. Çапла вара 67 гектар тырра 7 кун хушшинче вырса пуçтарассишĕн кашни колхозник çине тăрса кĕрешет.

Колхозниксем кунлăх ĕç нормине иртерсе тултараççĕ. 4-мĕш звенори колхозницăсем ĕç нормине 150 процент-ран кая юлмасăр тултараççĕ. Елена Иванова вырма кун хушши ĕнтĕ нормăна 220-шер процент тултарса пырать. Ольга Анисимова та икĕ çынпа вырать.

Виççĕмĕш звенона 67 çулти мучи Кирилл Иванов ертсе пырать. Унăн звенинче те ĕç тухăçлăхĕ пысăк. Зина Иванова, Дарья Служенкова колхозницăсем куллен 0,16 гектар выраççĕ. 13 çулти Елена Данилова нормăна 130 процент тултарать.

Паян уйрăмах ĕç хĕрӳллĕн пырать. Агитатор учительница Клавдия Никонова колхозниксене асăл çулла пирĕн войскăсене саламлакан приказа ăнлантарса пачĕ. Ун хыççăн кашни колхозник тата хĕрӳллĕнрех тăрăшса ĕçлеме тытăнчĕ.

Х. ЛИСИН.

10 колхоз ыраш тата кĕрхи тулă вырса пĕтерчĕ

ЕЛЧĔК, июлĕн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри Ворошилов ячĕпе тăракан, «Мотор», «Новый путь», Пушкин ячĕпе тăракан, «Осоавиахим» тата ытти колхозсем—пурĕ 10 колхоз кĕрхи тырпула вырса пĕтерчĕç. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз кĕрхи тырăсене 325 гектар çинчен вырса пухрĕ, халĕ çурхи тырăсене вырать. Районĕпе кĕрхи тырăсен 7200 гектарне вырнă. Вăл шутран [illegible] 3.500 гектар вырнă.

А. ЧЕРНОВ.

Ĕçе тĕрĕс йĕркеленĕ çĕрте

ЭЛЕК, июлĕн 31-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Куракăшри «Безбожник» колхоз членĕсем ыраш вырма тухсан малтанхи кунсенче тырра пурте пĕрле юнашар тăрса выратчĕç. Капла ĕçленипе колхозниксен ĕçне шута илсе пыма та хĕн пулнă, тухăçлăн ĕçлеме те интерес пулман. Çакна колхозниксем часах туйса илчĕç. Халĕ вĕсем звеносене пайланса ĕçлеççĕ. Звеносенче те кашни колхозник уйрăм участоксем уйăрса илсе ĕçлет. Çавна пула халĕ ĕç тухăçлăхĕ ылай ӳсрĕ. Нумай колхозниксем талăкри нормăна иртерсе тултарма пуçларĕç. К. Александрова, У. Иванова, Е. Дмитриева колхозницăсем кунне 0,13–0,14 гектар выраççĕ, М. Филиппова, Т. Никифорова, М. Афанасьева юлташсем ĕç нормине кулленех 150 процент тултараççĕ. Ăмăрту анлăн сарăлчĕ.

Çак кунсенче колхозниксем Сталин юлташ войскăсене панă приказпа паллашрĕç. Çулпуçăн приказне кашни колхозникех тимлĕн итлерĕ, лайăхрах ĕçлеме пулчĕ.

— Хĕрлĕ Çар воинĕсем тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçаççĕ. Вĕсен çитĕнĕвĕ пире савăнтарать, лайăхрах та тимлĕрех ĕçлеме чĕнет,—теççĕ колхозниксем.

Юлашки вăхăтра çанталăк йĕпе тăчĕ. Çапах уйăмирте ĕç чарăнмарĕ. Колхозниксем çăмăр çуман вăхăтри кашни сехетпе усă курчĕç, тырă вырчĕç тата пуса татса пĕтерсе ăна шыва хутрĕç.

Ăнса пулнă тырпула чипер пухса илмелле. «Безбожник» колхоз членĕсем бригадирсем пырса чĕнессине кĕтсе тămaççĕ. Кашниех пĕлет—çĕнтерӳ уйхирти ĕçре те тимлĕн ĕçленипе çеç пулать. Вĕсем ĕçе ир ирех тухаççĕ, кункаçах хĕрӳллĕн, тăрăшса ĕçлеççĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех колхоз 40 гектар вырса пуçтарчĕ.

Шкул ачисем ĕçре

КУСЛАВККА. «Искра» колхозра çураки вăхăтĕнче шкул ачисенчен бригада организациленĕ. Вăл бригадăна Ю. Поздельникова учительница ертсе пырать. Халь çав бригада уйри тырпулсене пухса кĕрес ĕçре тăрăшса ĕçлет. Ку тарăнччен А. Соловьев, М. Репов, В. Давыдов тата ытти вĕренекенсем те 100-шер ĕçкунĕ ытла ĕçлесе илнĕ.

М. ИЛЬИН.

* * *

СЕНТЕР. Кашмашри тулли мар вăтам шкул 1942–43-мĕш вĕренӳ çулĕнче оборонăпа физкультура предмечĕсене вĕренес ĕçре пысăк çитĕнӳсем турĕ. Çавăншăн Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ шкулта вăрçă ĕçне вĕрентессине лайăх йĕркеленĕшĕн шкул директорне Т. Н. Николаева юлташа тата военрука Г. Я. Акимов юлташа тав тунă. Унсăр пуçне 2000 тенкĕ укçан преми панă. Çав укçапа килес вĕренӳ çулĕ валли 42 противогаз, 40 топографи карттти, 15 граната макечĕ, 6 мелкокалиберлăй винтовка, 40 мăшăр йĕлтĕр тата ытти япаласем те илнĕ.

Шкул ачисем хальхи вăхăтра колхозра уборкăна кĕске вăхăтра иртерме пулăшаççĕ. 6-мĕш класри А. Замятин 130 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ, 5-мĕш класри Л. Демянов 30 ĕçкунĕ, В. Демянов 26 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ.

М. ИСАЕВ.

Лашасем пирки йышăннă постановление пурнăçа кĕртеççĕ

ШĂХАСАН. Тури Сурăмри «Заря» колхозра иртнĕ çулсенче лашасене япăх пăхатчĕç. Конюхсем хăйсен ĕçĕсене ытахальтен тенĕ пек çеç туса пынипе лашасем начарланса çитнĕччĕ, вĕсене вăхăтра кастарса шăварманнисем те, апат паманнисем те пулнă.

Кăçалхи апрель уйăхĕнче СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Лашасене пăхса, вĕсен йышне ӳстерсе пымалли мерăсем çинчен» постановлени кăларчĕç. Ку постановлени «Заря» колхозра анлăн сӳтсе-явнă, ăна колхозниксене те, конюхсене те тĕплĕн ăнлантарса панă. Çакăн хыççăн колхозра лашасене пăхас ĕç чылаях аванланчĕ. Конюхсем лашасене пăхмалли çирĕп йĕрке тытрĕç, вăхăтра апат параççĕ, шăвараççĕ, кантараççĕ. Колхозниксем те лашасемпе иртнĕ çулсенчи пек тăрлавсăр мар, йĕркеллĕн ĕçлеççĕ, кирлĕ-кирлĕ мар çĕрте хытă чуптарса е ытлашши тиесе ывăнтармаççĕ. Пĕлтĕр лашасен çурăмĕсене шуринне те тенĕ пекех ĕнерчĕк тимертсе пăсса пĕтернĕччĕ, кăçал вара ун пек лашасем пĕрре те çук.

«Заря» колхозра пĕтĕмпе 134 лаша шутланать. Вĕсенчен нумайĕшĕ вăтам ӳт-пӳллĕ, начаррисем сахаллансах пыраççĕ. Н. Алексеев, М. Владимиров, Я. Измайлов конюхсем лайăх ĕçлеççĕ, лашасем валли уйăрнă фуража та типтерлĕн тыткалаççĕ.

Анчах та, лашасем çине чунсăррăн пăхма хăтланакан колхозниксем халĕ те пур-ха. Аслă конюх А. Борисов лашасене асăрхасах тăманнипе, вĕсене тасатманнипе пĕр лашана чир ернĕ. Вăл ун çинчен çийĕнчех пĕлнĕ пулин те, шкама та шарламан, ветфельдшер патне кайса пăхма та шутламан. Çапла вара вăл пăхакан витери лашасенчен нумайĕшне чир ернĕ. Колхоз правленийĕ çакна вăхăтра сиссе А. Борисов ĕçне правлени ларăвĕнче пăхса тухрĕ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановленипе усă курса, правлени А. Борисовран чирлĕ лашасене тӳрлетмелли эмел укçин хакне шыраса илмелле тата лашасене сыватнă хыççăн хăйне конюхран кăлармалла турĕ. Ку решение колхозниксем килĕштерĕç.

Колхозăн кăçал 22 пĕтĕ кĕсре пулнă, вĕсем кашниех тĕреклĕ тихасем туса пачĕç. Халĕ вăл тихасене лайăх пăхаççĕ.

С. АСЛАН.

Кировецсем пек ĕçлеме пулаççĕ

Шупашкарти Горпромкомбинат коллективĕ Мускаври С. М. Киров ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ «Динамо» заводри рабочисем чĕнсе калани çине ответлесе, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре Хĕрлĕ Çара пур майпа та пулăшас кăмăлпа çунса, хăй çине икĕмĕш çурçулăн программине 130 процент тултарма обязательство илчĕ. Кировецсем чĕнсе калание кашни цехсенче сӳтсе-явнă хыççăн, рабочисемпе работницăсем хушшинче социализмлă ăмăрту çĕнĕ çĕклеӳпе сарăлса кайрĕ.

Тир-сăран тăвакан цехри работницăсем Копылова, Бунцева, Федосеева юлташсем кашни куллен ĕç нормине икĕ хут тултарса пыма пулнă. Илнĕ обязательствăна вĕсем тысăн пурнăçларĕç. Çак кунсенче кашниех задание вĕсем икĕ хут иртерсе тултарнă.

— Кировецсем чĕнсе калани социализмлă ăмăртăвăн ялавне татах та çӳлерех çĕклеме чĕнет. Çак чĕнӳ çине пирĕн хамăрăн ĕçри хастарлăхпа пултарулăха кăтартса ответлемелле,—тет стахановка Афанасьева юлташ.

А. ЧИРКОВА.

* * *

Шупашкарти табак фабрикинче Мускаври С. М. Киров ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ «Динамо» заводри рабочисемпе работницăсен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕ Совет Союзĕн мĕнтур рабочисене чĕнсе калани çине ответлесе митинг пулнă.

Паллă отахановец А. Фролов юлташ хăйĕн кĕске сăмахĕнче çапла каларĕ:

— Фронтăн икĕ хут вăй хурса ĕçлемелле тесе Сталин юлташ чĕнсе каланине эпир ăнланатпăр. Эпĕ çулталăк программине декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарма пулатăп,—терĕ.

Фабрика коллективĕ кировецсен чĕнĕвне хапăл туса йышăнса, хăй çине çак обязательствăсем илчĕ:

1. Çулталăк планне Сталинла Конституци кунĕ тĕлне—кăçалхи декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарма.
2. Ĕç тухăçлăхне планпа палăртнинчен 40 процент чухлĕ ӳстерме, продукци тăвакан хаке 15 процентран кая мар чакармалла.
3. Фабрикăри рабочисемпе работницăсен пурăнмалли çурчĕсене хĕле лайăх хатĕрлесе çитермелле. Динамовецсен чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн фабрика коллективĕ социализмлă ăмăртăва çĕнĕ вăйпа сарса ячĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

Хĕле хатĕрленме тытăнчĕç

Шупашкарти пир-авăр фабрикин коллективĕ хĕле лайăх хатĕрленсе кĕтсе илессишĕн тăрăшать. Рабочисем пурăнмалли икĕ общежитие юсаса пĕтерсе, çĕнĕрен тепĕр çурт тума тытăннă. Июлĕн 29-мĕшĕ тĕлне 950 кубометра яхăн вутă хатĕрленĕ. Вутă хатĕрленĕ çĕрте 60 çын ĕçлет.

Çак кунсенче цехсене юсас ĕç пуçланчĕ. Кировецсен чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн, фабрика коллективĕ задание срокчен тултарма тата кăçалхи хĕле кăтартуллăн хатĕрленме пулчĕ.

И. ИВАНОВ.

ИКĔ СТОЛИЦА ĂМĂРТĂВĔ

Сăра тăвакан завод коллективĕ июнь уйăхĕнчи производство планне 157 процент пурнăçланă. Июль уйăхĕнче Шупашкар хулипе Йошкар-Ола хушшинчи социализмлă ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăна завод халĕ пурнăçа кĕртет. Ку уйăхра ĕçри тĕрлĕ чăрмавсене пăхмасăр эпир плана тултартăмăр. Сăра тăвакан мастер А. Кузьмина юлташ задание яланах 200 процент тултарать. Работницăсем С. Константинова, Яковлева юлташсем ĕç нормине 150 процент таран пурнăçлаççĕ.

Коллектив çулталăк планне ноябрь уйăхĕ тĕлне пурнăçлама пулать. Рабочисемпе работницăсем илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн ăмăрту сарса ячĕç.

Хĕле валли 500 кубометр вутă хатĕрленĕ. Рабочисем пурăнакан 8 хваттере юсаса пĕтернĕ.

П. БЫКОВ,
Завод директорĕ.

Редакцие килнĕ çыру

Эпĕ 1940 çултанпа Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăратăп. Вăрçă пуçланнăранпах нимĕç оккупанчĕсене хирĕç çапăçатăп. Командованин заданийĕсене лайăх пурнăçланăшăн мана «За боевые заслуги» медаль тата «Отличный артиллерист» значок парса наградăларĕç.

1940 çулта хам кунта тухса килнĕ чух манран 67 çулхи вăтă атте юлчĕ. Вăл 1941 çулта куç чирĕпе чирлесе пачах суккăр пулса 6 уйăх хушши ним курмасăр выртнă. Шупашкар больници ăна çак чиртен сыватнă. Çакна пĕлсен, эпĕ савăнтăм. Тăшмана хирĕç çапăçас хастарлăх ӳсрĕ. Шупашкар поликлиникинчи врачсене манăн аттене сыватнăшăн чĕререн тав тăватăп, нимĕç оккупанчĕсемпе тата хытăрах çапăçма сăмах паратăп.

И. ШУРНЕЕВ.

Ютçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариатĕнче

Июлĕн 29-мĕшĕнче Совет правительстви СССР Союзĕн Турцири посольне Виноградов юлташа тата СССР Союзĕн Швецири ĕçĕсен поверенныйне Семенов юлташа Турципе Швеци правительствисене çакăн пек нота пама хушнă:

«Италири событисене шута илсе тата хăйсем тунă преступленисемшĕн ответ тытмалла пулассинчен хăтăлас майпа Муссолинипе ытти паллă фашистсем, вăрçă кăларакан ытти преступниксем нейтральнăй территорисенче пытанмашкăн хăтланма пултарассине шута илсе, СССР Союзĕн правительстви нейтральнăй çĕршывсене çулте асăннă çынсенчен нихăшне те пытанмашкăн май памасăр тăма чĕнет. Совет правительстви çакна та калама кирлĕ тесе шутлать: çавăн пек çынсене пытанма май пани, пулăшни е хута кĕни вăл—пĕрлешнĕ нацисен кĕрешӳри принципĕсене пăсни пулать тесе хаклать совет правительстви, çав принципсене пĕрлешнĕ нацисем хăйсен аллинчи пур майсемпе те пурнăçа кĕртме йышăнчĕç».

Совет правительствин аллинчи свенисем тăрăх, нейтральнăй çĕршывсен правительствисене Англи правительстви те çакăн пек нота янă.

Англи правительстви пĕлтерни

ЛОНДОН, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпар тăрăх, Лондонра паян официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Муссолини тата ун евĕрлĕ çынсем нейтральнăй çĕршывсенче пытанма пултарасси пирки тăракан ыйтăва Англи правительстви Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Совет Союзĕн правительствисем умне лартнă та ĕнтĕ. Çак ыйту çине виçĕ правительстви те пĕр пекех пăхни паларнă.

Англи правительстви çак тĕлĕпе президент Рузвельт калаçа панине хĕрӳллĕн саламлать тата ун çумне пĕрлешет.

Рузвельт пресс-конференцире калаçа пани

ЛОНДОН, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, президент Рузвельт паян пресс-конференцире нейтральнăй çĕршывсене, вĕсем вăрçă пуçлакан преступниксене пытанма май ан паччăр тесе, асăрхатарнă. Рузвельт çапла каланă: союзниксем Италипе кирек кама та [illegible] пурнăçлама пултараççĕ, вĕсем фашистла преступниксене тытса сута памалла. [illegible] Бадольо маршала фашист тесе шутлатăр-и тесе ыйтнă, Рузвельт [illegible]

Президент Рузвельт [illegible] лакан çĕршывсенчех усă суд умне тухса, хăйсен тискер ĕçĕсемшĕн ответ тытмалла пулĕ». 1942 çулхи октябрĕн 19-мĕшĕнче эпĕ çапла каларăм: «Вăрçă пуçласа айăпа кĕнĕ çынсене пĕрлешнĕ нацисен аллине памалла тăвасси [illegible]». Рузвельт [illegible] Муссолини, çавăн пекех тата Гитлерпа Тодзио ответ тытмалла пулассине шантарса [illegible] союзниксем Италипе çапла калаçса, Рузвельт çапла пĕлтернĕ: пирвайхи задача—хĕçпăшалпа хирĕç тăнине пĕтересси пулать, тенĕ. Унтан вăл пĕрлешнĕ нацисен декларацине аса илтернĕ, çав декларации ирĕке тухнă халăхсене самоопределени прави парать. Ку вăл тахçан ӳлĕм пулмалли япала. Ман шухăшпа, вăл хальхи вăхăтра тавлашса ларма сăлтав памасть, тенĕ юлашкинчен Рузвельт.

БОЛГАРИ ПАРЛАМЕНЧĔН ТĂВАЛЛĂ ЛАРĂВĔ

Оппозицири Мушановпа Стайнов депутатсем тухса калани

СТАМБУЛ, июлĕн 26-мĕшĕ. Июлĕн 22-мĕшĕнче Болгари парламентĕнче государствăн 1943 çул валли çĕнĕрен хушса памалли бюджечĕн законопроектне сӳтсе-явнă. Çав ыйту тăрăх тухса калакансен шутĕнче оппозицире тăракан Никола Мушановпа Петко Стайнов та пулнă. Вĕсем Болгарин тулашри тата шалти политики çинчен каланă.

Хăйĕн сăмахĕнче Мушанов çапла каланă: пулса пыракан ĕçсем пĕрре те Болгари хальхи вăхăтра тытса пыракан политика майлă тămaççĕ. Ĕçсем питĕ пысăк хăвăртлăхпа пулса пыраççĕ, анчах та вĕсем Болгарие пысăк хăрушлăхсем кăтартма пултараççĕ. Халех, ытла кая юлман чухне, ку политикăна тишкĕрсе пăхса тухас пулать, тенĕ Мушанов. Малалла вăл çапла каланă: халĕ иртсе кайнă политикăллă пурнăçа тепĕр хут аса илсе тивĕçлĕ выводсем тума вăхăт. Мушанов Болгарие пысăк инкексем кӳнĕ актсене аса илтернĕ. Çав актсем вĕсем—Болгари виçĕ держава пакчĕ çумне хутшăнни тата Америкăна хирĕç вăрçă пуçласа яни.

Болгари оккупациленĕ облаçсенчи лару-тăру çинчен асăннă май, Мушанов çапла каланă: ĕлĕк Болгари кӳршĕри çĕршывсемпе яланах лайăх пурăнма тăрăшнă, çав политика тĕрĕс пулнă.

Шалти политикăллă ыйтусем çинче чарăнса тăрса, Мушанов премьер-министрăн Филовăн тата шалти ĕçсен министрĕн Габровскийĕн шалти политикине питĕ хурланă. Вăл çапла каланă: влаç представителĕсене хирĕç пыракан терроpла ĕçсем Болгарире массăллăн пулса пыма пуçларĕç. Çакă вăл Филовпа Габровскийĕн политики пирки çапла пулса пырать. Болгари çĕршывĕнчи халăхăн чи лайăх пайне пĕтĕмпех концентрациллĕ лагерьсене тытса хупнă, унта пуринчен ытла ним айăпсăр çамрăксем асапланаççĕ. Хăшпĕр пĕчĕк ялсенчех 30-шар—40-шер çынна тытса хупнă. Нумайĕшĕ хăйсен килĕсене пăрахса тусем çине тараççĕ, мĕншĕн тесен никамăн та концентрациллĕ лагере лекес килмест.

Унтан Мушанов çапла каланă: чиновниксемпе служащисем иртĕнсе кайса государство пурлăхне çаратаççĕ. Ертсе пыракан руководительсем хушшинче те пăсăлса кайнă çынсем пур. Ун çинчен верховнăй военнăй суд председательне Никифоров генерала вырăнтан кăларни те лайăх пĕлтерсе тăрать. Мушанов тата çакна асăрхаттарнă: правительство еврейсем тĕлĕшпе тытса тăракан политика—юрăхсăр тата хăрушă политика.

Мушанов малалла çапла каланă: Болгари—ялхуçалăх çĕршывĕ, анчах çапах та пирĕн халĕ ялхуçалăхĕнче пысăк кризис, апат-çимĕç продукчĕсем çук. Халăх аш-какай аран-аран илет, ăна та пулин уйăхра пĕрре кăна параççĕ, çу тавраш пачах та çук. Рынокра хура биржа хуçа пулса тăчĕ.

Мушанов каланă чухне парламент председателĕ Калфов ăна темиçе хутчен те калама памасăр чарса тăнă. Мушанов Филоврaн хăй сăмахне каласа пĕтерме ирĕк пама ыйтнă. Анчах та Филов ăна хирĕç: парламент председательне пăхăнас пулать, тенĕ. Çакăн хыççăн вара Мушановăн ирĕксĕрех хăйĕн сăмахне калама чарăнмалла пулнă.

Мушанова хирĕç, массăллă арестсем пирки ответлесе, Филов тухса каланă. «Болгарире государствăна хирĕçле ĕçлекен çамрăк çынсем пур», тенĕ вăл. Филов терроpла ĕçсем тăвакансене е государствăна хирĕçле ытти ĕçсем тăвакансене пурне те питĕ хытă айăплассине çинчен хăратса каланă.

Депутат Петко Стайнов хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: бюджет ыйтăвне эпĕ правительствăна шанас е шанас мар ыйтупа çыхăнтаратăп, çавăнпа та эпĕ çар кредичĕсене хирĕç сасăларăм тенĕ вăл. «Филов правительстви,—тенĕ Стайнов,—Болгарие виçĕ держава пакчĕ çумне хутшăнтармалли протокола алă пусса, Болгарие пĕтерсе лартакан политикăна тытса пырать. Филов правительстви çĕршыва лайăх тытса тăрса ертсе пыма пултараймасть, ăна халăх пĕртте шанмасть. Ун пек нумайччен пыма пултараймасть. Халăх ку правительствăна вăрçăпа танах кураймасть.

Стайнов сăмахне те парламент председателĕ темиçе хутчен те чара-чара лартнă, Стайнова та хăйĕн сăмахне каласа пĕтерме паман. Вăл каланине залра тимлĕн итлесе ларнă.

Парламентра çавăн пекех тата правительство майлă депутатсем чылайĕшĕ тухса каланă, вĕсем хушшинче Петр Савов, Никола Султанов т. ыт. те пур.

Эйзенхауер генерал Итали халăхне чĕнсе калани

ЛОНДОН, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Алжирти радио союзниксен Çурçĕр Африкăри хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ Эйзенхауер генерал Итали халăхне чĕнсе каланине панă. Унта çапла каланă: «Итали халăхне вăрçа кĕрĕксе ярса ăна Гитлерăн инструменчĕ туса хунă çын—Муссолини—отставкăна тухнă хыççăн, Итали халăхне пĕрлешӳллĕ нацисенчен уйăрса тăракан пысăк хӳмене итальянецсем хăйсемех пĕтерсе лартрĕç». «Килĕшӳ тăвас çул çинче тăракан пĕртен-пĕр чăрмав—вăл Итали çĕршывне пуплаcа тăракан Германи агрессорĕ. Эсир килĕшӳшĕн. Эсир ăна халех илме пултаратăр. Усал условисем пе мар, чыслă условисемпе илме пултаратăр. Вăл условисем çинчен сире пирĕн правительствăсем пĕлтернĕ. Эпир сирĕн пата сире ирĕке кăларакансем пулса пыратпăр. Сирĕн халĕ акă мĕн тумалла: сирĕн çĕршывра тăракан нимĕçсен хĕçпăшаллă вăйĕсене халех кирек мĕнле пулăшу пама та чарăнмалла. Эсир çапла тусан, эпир сире нимĕçсенчен хăтарăпăр тата вăрçă хăрушлăхĕнчен çăлса хăварăпăр».

ЛОНДОН, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Эйзенхауер генерал Итали халăхне чĕнсе каланине союзниксен правительствисен ячĕпе пĕлтернĕ.

Лондонри ирĕклĕ итальянецсен комитечĕн çекретарĕ калаçа пани

ЛОНДОН, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри ирĕклĕ итальянецсен комитечĕн секретарĕ Андреа Симони ТАСС-ăн Лондонри корреспондентне çапла каланă: «Пирĕн комитет Муссолини отставкăна тухнине хапăлласа йышăнать. Ирĕклĕ итальянецсен комитетне фашизма хирĕçле итальянецсем—социалистсем, либералсем, монархистсем, республиканецсем, христиан-демократсем тата коммунистсем кĕреççĕ. Вĕсене пурне те пĕр программа пĕрлештерсе тăрать. Çак программа вăл—вăрçа чарса пĕтересси. Вĕсем Италире [illegible] пĕтересси. Вĕсем тĕллевĕсем çакă калама каймасть.

Симони тата каланă: Итали халăхĕ Бадольона Виктор Эммануила вăрçă вĕçлеме [illegible] вырăнне хурать. «Вăл, паллах ĕнтĕ,—тенĕ Симони,—акă мĕнрен килет: союзниксем Италие пĕр сăмахсăр парăнма хушнине мĕнле ăнланнинчен килет. Çавăн пек парăнма хушнă условисем ытла та йывăр пулсан, нимĕн те иккеленсе тăмалли çук, Бадольо вăрçăма пăрахас çук. Анчах та Итали халăхне вăрçă тата фашизм ывăнтарса çитерчĕ, халăх Муссолинирен вăрçа малалла тăсас тесе хăтăлмарĕ пулĕ», тенĕ.

Италири лару-тăру

ЖЕНЕВА, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Италири Стефани агентстви çапла пĕлтерет: июлĕн 27-мĕшĕнче министрсен кабинечĕ решени йышăннă. Çав решени тăрăх, мĕн вăрçă пĕтиччене политикăллă партисем тума юрамасть. Агентство пĕлтернĕ тăрăх, Италире фашистсен партин паллă членĕсене нумайĕшне тытса хупнă.

ЖЕНЕВА, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Италирен илнĕ хыпарсем тăрăх, Милан хулинчи хумханусем чарăнма пĕлмеççĕ. Милан районĕнчи войскăсен командующийĕ панă приказа пăхăнса тăмасăр, предприятисенче тата хула транспорчĕнче ĕçлекен рабочисем халĕ те забастовка тăваççĕ. Трамвай вагонĕсене çар командованийĕ тĕрĕслесе тăнипе салтаксем çӳретеççĕ. Çар влаçĕсем виçĕ çынран ытла пĕрле пухăнма чаракан приказа пăхăнман çынсене персе вĕлерессипе çинчен астутарса хăратаççĕ.

Сицилири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: союзниксен авиацийĕ çапах тăшманăн коммуникацийĕсене, автотранспортне тата Сицили порчĕсенче тăракан судносене атакăланă.

США çар министрĕн ĕçĕсене туса тăракан Петерсон çапла каланă: союзниксен войскисем Никозипе Аджирăна йышăнса илнĕ, тенĕ.

Петерсон шухăшĕпе, Сицилири вăрçă ĕçĕсем вĕçленсе çитеççĕ, союзниксем утрава çак кунсенче пĕтĕмĕшпех йышăнса пĕтермелле.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, И. В. Новиков юлташа Чăваш АССР Коммунальнăй хуçалăх Халăх Комиссарĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Вут-шанкă хатĕрлекен базăна чуркăсем татма рабочисем кирлĕ, çавăн пекех тата яланхи е вăхăтлăх ĕçе подсобнăй рабочисем кирлĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Карл Маркс урамĕ, 67.

Канцелярире ĕçлеме машинистка кирлĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Наркомзем Чувашской АССР, контора И. П. С.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1794 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. б. 53 84 п. л.